Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

2024 çул

Авăн (сентябрь), 6

ЭРНЕКУН

34/10724/№

Хакĕ ирĕклĕ

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

## Умри тĕллевсене палăртнă



**Юнкун Тăвай округĕнче Чăваш Республикин муниципалитет йĕркеленĕвĕсен Совечĕн ĕç тăвакан директорĕ Александр Кузнецов ĕçлĕ визитпа пулнă.**

Ĕçлĕ канашлăва территори уйрăмĕсен начальникĕсем те хутшăннă. Унта тĕрлĕ ыйту сӳтсе явнă, çав шутра – территорисен общество хăй тытăмлăхĕпе (ТОС) ял старостисен институтне аталантарасси, «Тухăçлă муниципалитет» («Эффективный муниципалитет») проекта пурнăça кĕртесси, Чăваш Енри муниципалитет йĕркеленĕвĕсен Совечĕ çумĕнче ĕç ушкăнĕсем йĕркелесе ертсе пырасси çинчен. Çавăн пекех муниципалитетсен кадрсемпе ĕçлессине вăйлатасси, палăртнă тĕллевсене пурнăçлассипе малашне те пĕрле ĕçлесси çинчен чарăнса тăнă.

Тăвай округĕнче пĕр ТОС – Тăрмăш территори уйрăмĕнче ĕçлет, çывăх вăхăтра вĕсене кашни ял тăрăхĕнчех йĕркелеме палăртаççĕ.

ПРЕСС-ЦЕНТР

**Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне округри ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсем пурĕ пĕрле 8860 гектар çинчи пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тĕш тырă культурисене пухса кĕртнĕ, ку вăл мĕнпур лаптăкăн 83 проценчĕпе танлашать. Ĕнерхи кун тĕлне пĕтĕмпе 24800 тонна тырă çапса илнĕ е кашни гектартан вăтамран 28 центнер. Уйрăм хуçалăхсенче вăтам тухăç 30 центнертан та пысăкрах. Вырма-2024 округра малалла пырать.**

**Çитес çулхи тухăç никĕсне хывса, ĕнерхи кун тĕлне 1195 гектар (планăн 52 проценчĕ чухлĕ) кĕрхи тĕш тырă культурисем акса хăварнă, çак шутран 909 гектарĕ – кĕрхи тулă, 286 гектарĕ – кĕрхи ыраш.**

**Ку вăхăт тĕлне 1400 гектар çĕртме сухи тунă.**

**2 гектар çинче сад çырли татса пухнă, пурĕ 12 тонна пухса илнĕ.**

**Севок сухан 5 гектар çинче кăларса пухнă, пурĕ 40 тонна хатĕрленĕ.**

## Генерал-майора асăнса – чупу

**Ĕнер Тăвай ялĕнчи спорткомплексра уголовнăй ĕçе пурнăçлакан системăн ветеранне, шалти службăн генерал-майорне Василий Валерианович Федорова асăнса çăмăл атлетика чупăвĕ иртнĕ.**

Унта УФСИН ертӳлĕхĕ тата командисем, Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, В.В.Федоров çемйин членĕсем, Тăвай муниципалитет округĕн командисен участникĕсем (шкул ачисем, организацисенче ĕçлекенсем) хутшăннă.

Малтанах Тĕмер масарне çитсе В.В.Федоров вил тăпри çине чечексем хунă. Ун хыççăн спорт турнирне уçнă. Тăвай округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, УФСИН начальникĕн заместителĕ, шалти службăн полковникĕ В.В.Адров, Василий Валериановичăн хĕрĕ Екатерина тата ыттисем саламлă сăмахсем каланă, шалти службăн генерал-майорне Василий Валерианович Федорова халалланă çăмăл атлетика чупăвне ăнăçлă ирттерме ырă суннă. Чупăва УФСИН ертӳлĕхĕпе сотрудникĕсем те, Тăвай муниципалитет округĕн çыннисем, предприятисемпе организацисенче тата учреждениесенче ĕçлекенсем, шкул ачисем, уйрăм çынсем хастар хутшăннă. Командăсен участникĕсене наградăсем парса хавхалантарнă. Кунтах кухня та ĕçленĕ.

Чупупа тĕплĕнрех çитес номерте паллаштаратпăр.

**Иван ИВАНОВ**






РАÇÇЕЙРЕ

## Хамăр çĕршывра кăларнисем

**Раççей Правительстви 2025 çултан смартфонсемпе компьютерсем çине лартмалли программăсен списокне çирĕплетнĕ.**

Списока 19 программа кĕнĕ, вĕсем пурте хамăр çĕршывра туса кăларнисем. Вĕсен шутĕнче: поисковик, навигатор, почта служби, социаллă сетьсене тухма пулăшакан программăсем, сасăпа ĕçлекен пулăшуçă, мессенджер, «Мир» тӳлев сервисĕ, «Госуслуги», приложенисен RuStore сервисĕ.

Цифра телевизорсенче хамăр çĕршывра туса кăларнă 18 программа вырнаçтараççĕ.

## Паянхи объектсенче

**Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов Тĕмерти культура çуртне тĕп юсав тăвасси мĕнлерех пулса пынипе паллашнă.**

Кунта юсав ĕçĕсем малалла пыраççĕ, анчах графикрен юларах ĕçленине кăтартса панă Олег Анатольевич, çакна тата ĕçсен пахалăхне тимлĕхре тытма сĕннĕ.

Тăвай ялĕнчи Тăм шывĕ çинче гидротехника сооруженине тунă çĕрте те пулнă округ пуçлăхĕ. Кунта халĕ шыв юхтарса кăлармалли канала тасатаççĕ, юханшыв çулне тарăнлатса сараççĕ. Çĕр ĕçĕсем пурнăçлаççĕ. Строительсем малашлăх ĕçсемпе паллаштарнă.

ГРАНТ

## «Перспектива» – ялти бизнес валли

**ЧР Ял хуçалăх министерствинче «Перспектива» грант илме паракан заявкăсене йышăнма пуçланă.**

– «Перспектива» валли кăçал бюджетра 150 миллион тенкĕ пăхса хăварнă, ку виçе иртнĕ çулхинчен 20 процент пысăкрах. Грантпа хавхалантармалли çул-йĕрсем те анлăрах. Сӳтсе явнă хыççăн кăçал çырла çитĕнтерекенсене, пулă, сурăх ĕрчетекенсене, агротуризма аталантаракансене, уçă çĕрте пахча çимĕç туса илекенсене пулăшма йышăнтăмăр,–пĕлтернĕ вице-премьер – ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов.

Заявкăсене авăн уйăхĕн 26-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Çĕнтерӳçĕсем грант укçине ял хуçалăх продукцийĕ упранакан объектсен строительстви валли, вĕсене çĕнетме, çавăн пекех оборудовани, хунав-калча, сурăх туянма, кану вырăнĕсем йĕркелеме ямашкăн пултараççĕ.

РЕСПУБЛИКĂРА

## Туристсен йышĕ ӳсет

**«Чăваш Ен 2030 çул тĕлне туристсен йышне 1,5 миллион çынна çитерме палăртать», – тенĕ Чăваш Енĕн экономика аталанăвĕн министрĕ Дмитрий Краснов.**

Чăваш Енри гостиницăсемпе кану центрĕсем 2023 çул пуçланнăранпа 214 пин туриста йышăннă, унчченхи çак вăхăтринчен 30 процент ытларах. Çакă çĕр каçакансен шучĕ 538 пине çити ӳсни патне илсе çитернĕ. Ку вăл республикăра хăнасем вăтамран 2-3 кун пурăннипе пĕр килет. Хăйсем пурăннă вăхăтра çул çӳревçĕсем вырăнти учреждениесене тухса çӳреççĕ, суту-илӳ тăваççĕ, сувенирсем туянаççĕ тата экскурсисемшĕн тӳлеççĕ. Ку вара регион экономикине ырă витĕм кӳрет.

Пĕтĕмпе кăçал Чăваш Ен 450 пин турист йышăннă, çав шутра – гостиницăсен пулăшăвĕсемпе усă курманнисем те.




ÇЫРĂНТАРУ – 2024

**«Ял ĕçченĕ» хаçата 2024 çулхи октябрь-декабрь уйăхĕсенче илсе тăма çыхăну уйрăмĕсенче çыраççĕ. Тăвата уйăха – 309 тенкĕ те 87 пус. Альтернативлă йĕркепе çырăнмалли хак – 240 тенкĕ.**

НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ ОБРАЗОВАНИЕ

# Вĕренӳ тытăмне аталантарса

**Тăвай округĕнчи вĕренӳ учрежденийĕсенче çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа савăнăçлă линейкăсем иртнĕ. Вĕсене администраци представителĕсем, депутатсем, педагогика ĕçĕн ветеранĕсем, ашшĕ-амăшĕ хутшăннă.**

**Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов тата Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ертӳçи Александр Шакин Пĕлӳ кунĕнче Совет Союзĕн Геройĕ П.Х.Бухтулов ячĕллĕ Тăвайри тата Тăрмăшри вăтам шкулсенчи ачасене саламланă, çирĕп сывлăх, ăнăçусем суннă.**

2024–2025 вĕренӳ çулĕнче Тăвай енри шкулсенче 1192 ача партăсем хушшине ларнă, вĕсенчен 76 ача – пĕрремĕш класа каякансем. Ку вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнчен пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн федерацин патшалăхăн çĕнетнĕ стандарчĕсене пурнăçласси малалла ĕçлеççĕ. «Труд», «Основы безопасности и защиты Родины» çĕнĕ предметсем кĕртнĕ вĕренӳ программине.

Муниципалитет округĕнчи вĕрентӳ организацийĕсен инфратытăмне аталантарассипе палăрмалла улшăнусем пулса иртеççĕ. Кăçал вĕсенчи пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетме мĕнпур финанс çăлкуçĕсенчен 27 миллион тенкĕ укçа уйăрнă.

2024 çулта пуçару бюджечĕн мелĕпе 7 шкулта (Тушкилпе Тăрмăшсăр пуçне) 15 проект пурнăçа кĕртнĕ. Çав шутран Тăвайри вăтам шкулта – 3 проект, Николай Афанасьев ячĕллĕ Тĕмерти тата Чутей шкулĕсенче – 2-шер проект. Элпуç, Мучар, Чутей, Тĕмер шкулĕсенче автоматла пушар сигнализацийĕсен, эвакуаципе пĕлтерӳ тытăмĕсене çĕнетнĕ.

Тĕмер шкулĕнче блоксенчен çĕнĕ котельнăй, Енĕш Нăрваш шкулĕн территорийĕнче универсаллă спорт лапамĕ тунă. Пуçару программипе çавăн пекех Çар мухтавĕн кĕтесне, акт залне, крыльцана çĕнетсе типтерленĕ, пĕчĕк архитектура хатĕрĕсем вырнаçтарнă.

Вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕ тĕлне шкул библиотекисен фончĕсем çĕнелнĕ, шкулсенче вĕренекенсене вĕренӳ литературипе туллин тивĕçтернĕ. Шкулсене педагогика кадрĕсемпе комплектланă. «Земство учителĕ» программăпа 2 специалист ĕçлеме пуçланă. 147 педагогика ĕçченĕнчен 140-шĕ – учительсем, вĕсенчен 89,3 процентĕ – аслă пĕлӳллĕ.

«Вĕренӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Тушкилти тата Тăвайри шкулсенче социаллă тата гуманитари енĕпе хушма вырăнсем уçăлаççĕ. «Шкул медиацентрĕ» программăна пурнăçлама вĕсенче 173,6 пин тенкĕ янă, унта 30 ачана явăçтармалла. «Çав шутра Тăвай шкулĕнче 98 пин тенкĕ янă,–пĕлтерет шкул директорĕн çумĕ Надежда Михайлова. – Вĕсен шутĕнче – нумай функциллĕ, хатĕр, ноутбук, интерактивлă панельсем, цифра камерисем. «Цифра вĕренӳ хутлăхĕ» проекта ĕçе кĕртме чылай оборудовани илнĕ. Пĕтĕмпе вара хатĕрсем валли 3292,30 пин тенкĕ уйăрнă».



Тăрмăш шкулĕнчи Пĕлӳ кунĕнче

**Раиса ШУМОВА**

# Чутейри «Пĕрремĕшсен юхăмĕ» – конкурс çĕнтерӳçи

**«Пĕрремĕшсен юхăмĕн» уйрăмĕсем округри шкулсенче вăй илсе пыраççĕ. Вĕсен йышĕнче – хастар ачасемпе çамрăксем. «Пысăк йышпа пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тумалла. Ырă сĕнӳсемпе пуçарусем пухмалла, вĕсене усăллă проектсен никĕсне хывмалла. Çав проектсем ачасене хăйсене те усă кӳччĕр. Çавна май региона та вăйлатăпăр, çĕршыв аталанăвне тӳпе хывăпăр»,–палăртнă ЧР Пуçлăхĕ Олег Николаев.**

Çапла Чутейри вăтам шкулти çамрăксен юхăмĕн ушкăнĕ кĕске вăхăтрах çитĕнӳсем тума ĕлкĕрчĕ. Регионти уйрăмĕн председателĕнчен О.В.Илларионоваран шкул директорĕн советникĕ, уйрăма ертсе пыракан Людмила Титова ячĕпе Тав туни килнĕ. Чутей шкулĕнчи «Пĕрремĕшсен юхăмĕн» пултарулă çамрăкĕсем Пĕтĕм Раççейри чи лайăх проектсен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕсен шутне кĕнĕ, 200 пин тенкĕ премие тивĕçнĕ. Çав укçана вĕсем пурлăхпа техника никĕсне пуянлатма, мероприятисем иртерме яма палăртаççĕ.

**Татьяна ИВАНОВА,**
**«Пĕрремĕшсен юхăмĕн» округри уйрăмĕн ертӳçи**

## РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

• Ĕнер, сентябрĕн 5-мĕшĕнче, Андриян Григорьевич Николаев космонавт-летчик çуралнăранпа 95 çул çитнĕ.

• Чăваш Енĕн тулашри суту-илӳ çаврăнăшĕ юлашки çулсенче 1,5 хута яхăн пысăкланнă. ЧР Пуçлăхĕ Олег Николаев каланă тăрăх, 2019 çулта вăл АПШн 525,2 миллион долларĕпе танлашнă пулсан, 2023 çулта вара 733,9 миллиона çитнĕ. Экспорт пĕлтĕр 264 миллион долларпа танлашнă, пилĕк çул каялла вара 199,7 миллион доллар пулнă.

• Санитари авиацийĕ пулăшнипе Çĕмĕрле округĕнче пурăнакан 94 çулти хĕрарăмăн пурнăçне çăлса хăварнă, ăна Шупашкар хулинчи кардиоцентр специалисчĕсен аллине панă.

Кăçал санавиаци пилочĕсем Чăваш Енри округсене 34 хутчен вĕçнĕ.

• 2025 çула Чăваш Енре Çĕнтерĕве халалласшăн. Муниципалитетсенчен ытларахăшĕ 2025 çула патриотизмпа çыхăнтарма сĕннĕ. Çулталăка вăл е ку темăна халалласси республикăра 2003 çултанпа йăлана кĕнĕ – çав çул Çемье çулталăкĕ пулнă. Кăçал Экологи культурин тата çут çанталăкпа тирпейлĕ усă курмалли çулталăкра пурăнатпăр. Экологи культурин çулталăкĕн тивлечĕпе кăçал Тăвай округĕн территорийĕнче республикăри чи сумлă «Хура çăл» çăлкуçĕсем экологипе географи фестивалĕ иртрĕ.

• Кăçалхи çичĕ уйăхра ултавçăсем республикăра пурăнакансен 543 миллиона яхăн тенкине вăрланă. Асăрханăр – ултавçăсем банк ĕçченĕсем, полици сотрудникĕсем, çывăх çыннăрсем пек пулса шăнкăравлама пултараççĕ. Вĕсен тĕллевĕ – банк карттин реквизичĕсене пĕлесси, сирĕн укçăра сăптăрса илесси.

• Тăвай ялĕнче Тăм шывĕ çинчи гидротехника сооруженине тĕп юсав туса çĕнетесси малалла пырать. Кунта 26,5 миллион тенкĕлĕх ĕçсем пурнăçламалла. Подрядчикĕ – Шупашкарти «Альянс» ООО предприяти.

• Августăн 29-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ республика çыннисене канăçсăрлантаракан ыйтусемпе тӳрĕ лини ирттернĕ. Икĕ сехет те 7 минута тăсăлнă эфир вăхăтĕнче Олег Николаев 34 ыйтăва хуравлама ĕлкĕрнĕ.

• Етĕрне округĕнче республикăри фермерсен слечĕ иртнĕ. Унта чи лайăх 100 хресчен-фермер хуçалăхĕн списокне тăратнă. Рейтинга «Агро-Инновацисем» предприяти йĕркеленĕ. ТОП-10 йышне чи хастар фермер-хуçалăхĕсен ертӳçисем кĕнĕ. Вĕсен йышĕнче пирĕн округри Валерий Грачевпа Сергей Илларионов фермерсем те пур.

**Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**

# Тăрăшни сая каймарĕ

**Енĕш Нăрваш ялĕнче питĕ асамлă та сăваплă вырăн – «Сикте» çăлкуçĕ пур. Çакăнтан пуçланса кайнă та ĕнтĕ Енĕш Нăрваш ялĕ. Пуçарулă бюджет мелĕпе усă курса юхăнса кайнă çырмана типтерлес терĕмĕр. Асăннă программăпа килĕшӳллĕн халăхран 247 пин те 190 тенкĕ укçа пухнă, ыттине – тĕрлĕ бюджетсенчен.**



Ял çыннисемпе субботниксем туса та нумай типтерлерĕмĕр юхăнса кайнă çырмана. Тăрăшни сая каймарĕ. Халĕ хамăр тунă ĕçе пăхса савăнатпăр! Августăн 27-мĕшĕнче питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ самант пулса иртрĕ. Ялти чиркӳ настоятелĕ Георгий атте çăла кĕлĕ туса сăваплрĕ. Çынсем чылаях пухăнчĕç. Округ администрацийĕн территорисене тирпей-илем кĕртес тата аталантарас ĕç управленийĕн начальникĕ Вероника Николаева та пирĕн ĕçе лайăх хак пачĕ. Тăрăшса ĕçленисем Тав хучĕсемпе парнесене тивĕçлĕ пулчĕç. «Ялтан яла» радиопередача йĕркелекен Владимир Егоров Сикте çăлкуçĕ çинчен передача хатĕрлерĕ.

Нумай ĕç тунă. Малашлăх тĕллевĕсем тата та пысăкха. Сикте çăлкуçĕ таврашĕ хитреленсе, типтерленсе пырасса шанас килет.

**Надежда ЧЕРНОВА,**
**ял старости**

# Паттăрлăх вилĕмсĕр

**Украинăри ятарлă çар операцийĕнче служба тивĕçне пурнăçланă чух хăюлăх кăтартса пуç хунă Алексей Михайлович Алексеева пĕлтĕрхи раштав уйăхĕн вĕçĕнче Вăрманхĕрри ялне пытарнă. Çакăн хыççăн 8 уйăх иртсен, кăçал çурла уйăхĕнче, «Паттăрлăхшăн» орден хăйĕн хуçине тупрĕ.**



Канаш хули, Канаш тата Тăвай районĕсен çар комиссариатĕнче Евгений Семенов çар комиссарĕ пысăк наградăна Алексейăн ашшĕпе амăшне Михаил Егоровичпа Альбина Николаевнăна панă, патриотлă пысăк событие çывăх çыннисемпе тăванĕсем, юлташĕсем хутшăннă. Çакăн пек паттăр ывăл çуратса ÿстернĕшĕн, тĕрĕс воспитани панăшăн ашшĕпе амăшне тав тунă. Вĕсем вара чăннипех те хисеплĕ çынсем. Михаил Егорович Совет Союзĕн Геройĕ П.Х.Бухтулов ячĕллĕ Тăвайри вăтам шкулта ОБЖ, физкультура вĕрентет, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ. Унăн воспитанникĕсем çулленех çарпа спорт вăййисенче малти вырăнсене йышăнаççĕ. Ывăлĕ те пуçламăш çар вĕрентĕвне ăша хывса ÿснĕ. Шкулти ăмăртусенчен нихăçан та айккинче тăман. Альбина Николаевнăн ĕçри хастарлăхне район общественноçĕ апатлану тытăмĕнчи çитĕнĕвĕсемшĕн тивĕçнĕ хисеп хучĕсемпе тав сăмахĕсем çирĕплетеççĕ. Республикăри куравсенче те хăйсен ĕçĕсемпе пĕрре мар палăрнă коллектив.

«Кашни паттăрăн çĕршыв историне çырăнса юлмалла, Алексей – çĕршывăн чăн-чăн паттăрĕ, мухтавĕ. Шанчăклă хÿтĕлевçĕн ячĕ манăçмĕ. Военкоматра ĕçлекенсене – Е.С.Семенова, В.Н.Сорокина, Эльвира Геннадьевнапа Екатерина Анатольевнана тĕрĕслĕхе шыраса тупма пулăшнăшăн хамăрăн йышлă Алексеевсен ятĕнчен тав сăмахĕ каласшăн. Çак награда паттăрлăхăн вилĕмсĕр тĕслĕхне пысăк хак пани»,–палăртнă çывăх тăванĕ Владимир Вениаминович Алексеев.

А.М.Алексеев 1992 çулхи нарăсăн 13-мĕшĕнче Вăрманхĕрри ялĕнче çуралнă. Чÿкçырминчи, унтан Тăвайри вăтам шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Сăпайлă та ĕçчен, тÿрĕ кăмăллă, сăмахне тытма пĕлекен юлташ пулнине палăртаççĕ пĕрле вĕреннисем. Шкул хыççăн 2010 çулта Раççей çарĕн ретне тăнă. Служба вăхăчĕ Лăпкă тинĕс флочĕн тинĕс пехотин уйрăм бригадинчи десантпа штурм ротинче иртнĕ. Аслисен тĕслĕхĕпе ачаран кăмăл-туйăмпа пиçĕхсе, спорта юратнăран вăй-хал тĕлĕшĕнчен вăйлă аталаннă вăл. Алексей çемьере пĕртен-пĕр ача пек туйман. Çумра ялан иккĕмĕш сыпăкри Вениамин пиччĕшĕн ывăлĕсем тата вĕсен хĕрĕ Ольга пулнă, пĕр пысăк çемьери пек ÿснĕ, кирек епле йывăрлăхра та пĕр-пĕрне пулăшу панă. «Чăн-чăн патриотизм шкулĕ вĕсем маншăн»,– çапла каланине Алексейран пĕрре çеç мар илтнĕ. Вăй-хал тата ăс-тăн енчен çирĕпскерсем, Владимир тата Геннадий Вениаминовичсем, унтан Алексей Михайлович тинĕс çар пехотинче салтак тивĕçне пурнăçланă. Вĕсем вара чăн-чăн чыс-сум та патриот тĕслĕхĕ вырăнне Кремль полкĕнче служба́ра тăнă Валентин Вениаминович Алексеева хунă. Вăл чăнах та Раççей хÿтĕлевçи пулса хĕрÿ хастарлăхпа, Тăван çĕршыва чунтан парăннипе уйрăлса тăнă.

2012–2016 çулсенче Алексей Алексеев Мускаври патшалăх автомобильпе çулйĕр институчĕн Шупашкарти филиалĕнче аслă пĕлÿ илнĕ.

Арçыннăн çемьене, тăванĕсене, çĕршыва – мирлĕ пурнăçа – хÿтĕлемелле. Ятарлă çар операцине каяс шухăш хирĕçтăру пуçлансанах амаланнă. Иртнĕ çулхи çурла уйăхĕнче Алексей Алексеев çара хăй ирĕкĕпе кайма контракт çырнă. Çар вĕрентĕвĕ хыççăн вăл Луганск енче разведкăпа штурм отрядĕнче малтанхи кунран пуçласах хĕрÿ линире çапăçнă. Раштав уйăхĕн 20-мĕшĕнче пĕр заданире вĕсен отрячĕ неонацистсен диверсипе разведкăн самаях пысăк ушкăнне тĕп тунă. Питех те шел, Алексей вара пуçран вилмеллех аманнă. Ывăлĕ, стрелоксен уйрăмĕн снайперĕ, çар служби вăхăтĕнче вилни çинчен пĕлтернĕ Михаил Егоровичпа Альбина Николаевнана.

Ентеш паттăрăн ырă ĕçĕсем манăçмĕç. Çар тивĕçне чыслăн пурнăçланă А.М.Алексеева асăнса Вăрманхĕрри ялне пырса кĕнĕ çĕрте çак кунсенче баннер вырнаçтарнă. Сăн ÿкерчĕк çинчи каччă кунтан иртен-çÿрене мирлĕ пурнăçа упрама чĕнсе телейлĕ çул суннăн туйăнать. Тăвайри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкулти 6Б класа Алексей Алексеев ятне панă.

Çĕршыв хÿтĕлевçи, яту сан вилĕмсĕр! Çутă сăнару ĕмĕрех пирĕн чĕресенче упранĕ.

**Раиса ШУМОВА**

ДЕМОГРАФИ

# Ытларах арçын ачасем

**Кăçалхи 8 уйăхра округ администрацийĕн ЗАГС пайĕнче 237 гражданла акта (танлаштарма, 2023 çулхи çак тапхăрта – 230) регистрациленĕ.**

**Август уйăхĕнче тин çуралнисен статистикине 10 арçын ачапа 1 хĕрача хушăннă. Кĕр пуçламăшĕ тĕлне вара 41 пепке кун çути курнă (2023 çулта – 50), вĕсенчен 26 арçын ачапа 15 хĕрача. Çав шутран пĕрремĕш ача – 10 çемьере, иккĕмĕш – 13, виççĕмĕш – 11, тăваттăмĕш – 5 çемьере. Нумай ачаллă çемьесене пиллĕкмĕш тата улттăмĕш пепкесем хушăннă.**

Мĕнле ятсене ытларах килĕштереççĕ-ха пирĕн Тăвай тăрăхĕнче. Пулас хÿтĕлевçĕсене Антон, Арсений (3), Артем (2), Елисей, Демьян, Денис, Дмитрий, Иван, Илья, Константин, Макар (2), Максим, Мирослав, Мирон (2), Михаил, Никита, Рамиль, Роман, Тимофей, Ярослав (2) ятсем хунă. Чиперккесене вара Аделина, Алита, Амина, Ангелина, Арина, Валерия, Василиса, Виктория, Есения, Залина, Ксения, Полина, София (2), Софья тесе чĕнеççĕ.

Туйсем пĕлтĕрхинчен ытларах пулнине палăртма кăмăллă, 8 уйăхра 17 çĕнĕ çемье чăмăртаннă (2023 çулта – 12). Мăшăрланмасăр çуратнă 9 тĕслĕхре ашшĕ кам пулнине палăртнă.

Январь-август уйăхĕсенче 151 çын вилнĕ (пĕлтĕр çак тапхăрта – 138), 88 арçынпа 63 хĕрарăм.

14 çемьерен (2023 ç. – 9) 13-шĕ суд йышăнăвĕпе, пĕр мăшăр хăйсен килĕшĕвĕпе уйрăлнă.

Пĕр çемье 42 çул пурăннă хыççăн, теприсен 2 çул хыççăн арканнă.

Отчетлă тапхăрта ЗАГС пайĕ юридици пĕлтерĕшлĕ 1127 свидетельствосправка панă.

**Валентина НОВИКОВА, ЗАГС пайĕн ертÿçи**

# Асăнмалăх ÿкерĕнтĕмĕр

**2003 çулта Енĕш Нăрваш ялĕнче хамăрăн ентеш, СССР халăх артистки Вера Кузьмина 80 çул тултарнине чаплăн уявлама Мускав хăнисем, журналистсем, Чăваш наципе культура автономийĕн представителĕсем килнĕччĕ. Çавăн чухне вĕсем пирĕн ял ĕçченĕсене çĕршывăн тĕп хулинче йĕркелесе иртеркен Пĕтĕм чăвашсен Акатуйне уявлама пымашкăн йыхравланăччĕ.**

Праçникре пирĕн мухтавлă ентешĕмĕр Андриян Григорьевич Николаев космонавт летчик та пулнăччĕ. Эпир юнашарах тăнă, çавна май пирĕн куççем Геройăн икĕ ылтăн çăлтăрĕ çинчен кайман та темелле. Çав вăхăтра пĕр çăлтăрĕ вăт-вăт пушанса ÿкес патне çитнине асăрхарăмăр. Космонавта ун пирки пырса каларăмăр. Çавăнтан паллашса каласса кайрăмăр. Пире çав самантрах фотографсем çавăрса илчĕç, вара асăнмалăх пĕрле сăн ÿкерттертĕмĕр. Çакна эпĕ тепĕр хут А.Г.Николаев çуралнăранпа 95 çул çитнĕ май аса илтĕм.

**Владимир ВАНЕРКЕ, Енĕш Нăрваш ялĕ**



КОНКУРССЕМ

# Чи лайăххине палăртнă

**«Тăвай округĕн чи лайăх дружинникĕ» ята çĕнсе илессишĕн саккăрăн тупăшнă. Конкурс «ДЮСШ-ФСК «Аль» учреждение иртнĕ. Юридици хатĕрленĕвĕ витĕр тухмалла, çав шутра пирвайхи медицина пулăшăвĕ пама пĕлмелле пулнă вĕсен.**





«Чи лайăх дружинник» ята халăх дружинникĕсен командирĕ Владимир Валерианович Федоров тивĕçнĕ. Алина Александровна Федорова иккĕмĕш, Вениамин Никитич Иванов виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. Вĕсене дипломсем парса хавхалантарнă.

«Республикăри чи лайăх дружинник» ята çĕнсе илессишĕн конкурсра округ чысне Владимир Федоров хÿтĕлет.

**Хамăр инф.**

# 2023 çулхи кĕнеке çулталăкĕ

**Чăваш Ен вулавăшĕ «Чăваш Ен литератури: кĕнеке çулталăкĕ–2023» конкурс иртерет.**

Фестиваль-конкурса йĕркелеме ЧР Культура министерстви, çавăн пекех ЧР Профессионал писательсен союзĕ, Чăваш кĕнеке издательстви тата Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ хушăнаççĕ.

Ĕçсене çак номинацисемпе хаклаççĕ: «Чи лайăх ăслăлăх кĕнеки», «Тăван тăрăх çинчен чи лайăх кĕнеке», «Чи лайăх поэзи кĕнеки», «Ачасемпе çамрăксем валли чи лайăх кĕнеке», «Илемлĕ прозăн чи лайăх кĕнеки».

## МАНӐН ҪЕМЬЕ – МАНӐН ПУЯНЛӐХ

Проект Чӑваш Республикин цифра аталанӑвӗпе информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин пулӑшӑвӗпе пурнӑҫланать

# Ӗнӑҫу – ҫемье пӗрлӗхӗнче

**Ӳсӗмлӗ ӗҫлени, ӳсӗм тени хушӑнсах пыни ӗҫлекене савӑнтармасӑр тӑма пултараймасть. Акӑ 2024 ҫулхи сакӑр уйӑх итогӗсем тӑрӑх, «С.Р.Илларионов» хресчен-фермер хуҫалӑхӗн ҫемье фермине кашни ӗнерен вӑтамран сӗт суса илесси 6304 килограма ҫитнӗ, пӗлтӗрхи ҫак тапхӑртинчен те 1170 килограмм ытла хушӑннӑ. Тӑвай округӗнчи чи пысӑк продуктивлӑх ку. Ҫакӑн пекех ӗнӑҫлӑ ӗҫлесен, пӗр ӗне пуҫне сӑвӑм тӑхӑр пин килограма яхӑн е ытларах та пулӗ. Пирӗншӗн питӗ сулмаклӑ кӑтарту. Сӑвакан ӗнесем вара ҫемье фермин 440 пуҫ. Ҫак ҫирӗп никӗс ҫинче Илларионовсем кӑҫалхи январь-август уйӑхӗсенче пӗтӗмпе 2773 тонна ытла е иртнӗ ҫулхи ку тапхӑртинчен 22 процент нумайрах продукци туса илнӗ.**



Сергей Артамонов аслӑ тата кӗҫӗн Илларионовсемпе пӗрле

– Илларионовсем вывӑхсене тивӗҫлӗ пӑхса лайӑх суса илеҫҫӗ кӑна мар, сӗте хаклӑ хакпа тупӑшлӑ вырнаҫтарма та пултараҫҫӗ,–терӗ Тӑвай округ администрацийӗн ял хуҫалӑхӗпе экологи пайӗн начальникӗ Николай Родионович Краснов. – Хӑҫантанпа ӗнтӗ вӗсем Шупашкарпа Ҫӗнӗ Шупашкар ҫыннисене молокоматсем урлӑ пахалӑхлӑ сивӗтнӗ сӗтпе тивӗҫтереҫҫӗ литрне 35 тенкӗпе. Халиччен пирӗн районтан пулман хуласене ҫапла молокоматсем лартса пӗр-пӗр хуҫалӑхран сӗт сутни. Халӗ литрне 40 тенкӗ ҫинчен Хусана та ӑсатаҫҫӗ. Пуҫарулӑх та, тӑрӑшулӑх та ҫителӗклӗ хастар ҫемьен, предпринимательлӗх шӑнӑрӗ ҫирӗп. Тата малашлӑхпа ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ, кӗҫех акӑ 440 ӗне усрамалӑх ҫӗнӗ ӗне вити тӑвӗҫ, никӗсне янӑ. Унта ку чухнехи технологипе оборудовани, тухӑҫлӑ ӗҫлеме тивӗҫлӗ условисем пулӗҫ,–пӗтӗмлетрӗ хӑй шухӑшне Николай Родионович.



Сергей Разинович Илларионов

Эпӗ Тӑвайри Николай Кольцов предпринимателӗн шиномонтажӗ умӗнче сӑмах пуҫарнӑ аслӑ ҫулсенчи арҫын та Илларионовсем ҫинчен питӗ ӑшшӑн, тарават калаҫрӗ. «Вӗсемпе пӗр ялтан эпӗ – кӳршӗллӗ Вӑрмар районӗнчи Мӑнҫырма ялӗнчен. Хам эпӗ профессипе учитель. Кунта машина кустӑрмисен дискисене ҫӗннисемпе улӑштарма килтӗм. Илларионовсен ҫемйи пирки калас пулсан, ваттисем «Ӗҫ ҫынна илем кӳрет», «Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест» тени вӗсем пирки каланӑнах туйӑнать мана. Питӗ тӗслӗх илмелли ҫемье: аслашшӗ-асламӑшӗнчен, ашшӗ-амӑшӗнчен пуҫласах ӗҫшӗн ҫунакан, ачисемшӗн, тӑван тӑрӑхшӑн тӑрӑшакан ҫынсем пулнӑ. Ялта ҫеҫ мар, таврара та хисепре вӗсем. Халӗ аслисен пурнӑҫне, ӗҫне-хӗлне ачисемпе мӑнукӗсем, мӑнукӗсен ачисем малалла тӑсаҫҫӗ, ӑнӑҫу кӳреҫҫӗ, терӗ.

Аслӑ ӑру ҫыннисем – Илларион Павловичпа Анна Егоровна – йӗркеллӗ, ӗҫчен те хисеплӗ ҫынсем пулнӑ, тӗреклӗ хуҫалӑх тытнӑ, сад ӗрчетнӗ. Ултӑ ача ҫуратса ӳстернӗ мӑшӑр, вӗсем ашшӗпе амӑшӗ пекех ӗҫчен те ырӑ кӑмӑллӑ ҫитӗннӗ. Чи кӗҫӗннине Разин ят панӑ. Пӗве кӗрсен вӑл хӑй пекех хастар та сӑпайлӑ хӗрпе, Зоя Викторовнӑпа, ҫемье ҫавӑрнӑ. Иккӗшӗ те Сӗнтӗрвӑрринчи вӑрман техникумӗнче вӗренсе пӗлӳ илнӗскерсем, ӗмрипех Вӑрмарти сӗтел-пукан фабрикинче вӑй хунӑ. Туслӑ, ӗҫчен те ҫураҫуллӑ ҫемьере икӗ ывӑлпа виҫӗ хӗр ҫут тӗнчене килнӗ, вӗсем пурте хӑйсем кӑмӑллакан профессисене суйласа илсе аслӑ пӗлӳ илнӗ, пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑнӑ. Вӗсенчен чи асли – Сергей Разинович. Пӗлтӗр, Ҫӗнӗ ҫул умӗн, 2023 ҫулхи декабрӗн 30-мӗшӗнче, вӑл ҫут тӗнчене килнӗренпе 50 ҫул ҫитрӗ. Виҫӗ йӑмӑкӗн шӑллӗшӗн пурнӑҫра ылан ырӑ тӗслӗх вырӑнӗнче вӑл. Вӑтам шкул пӗтерсен ҫар службинче пулнӑ, мӗншӗн тесен Илларионовсен йӑхӗнче ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫе пурнӑҫлассинчен пӑрӑнса юлнисем халиччен пулман. Службӑна татсан Шупашкарти кооперации техникумӗнче пӗлӳ илнӗ, ун хыҫҫӑн предприниматель ӗҫне пуҫӑннӑ, «Ветеран» лавкка уҫса халӑха куллен кирлӗ таварпа тивӗҫтернӗ.

Унтан Сергей Разинович вунтӑватӑ ҫул Саратов облаҫӗнче ӗҫлесе пурӑннӑ, кунта та предприниматель ӗҫне малалла тӑснӑ, ҫӗр тара илсе, 2006 ҫулта хресчен-фермер хуҫалӑхӗ йӗркеленӗ, хӗвелҫаврӑнӑш ҫитӗнтерсе ҫу туса кӑларас ӗҫе пикеннӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех вӑл техникумра илнӗ пӗлӳ ҫителӗксӗррине туять, Саратоври экономика институтӗнче вӗренсе кӗҫех диплом илет, ҫӗнӗ вӑй-хӑватпа ӗҫе кӳлӗнет. Ҫав ҫулсенчех чипер те сӑпайлӑ хӗрпе Татьянӑпа паллашса ҫемье чӑмӑртаҫҫӗ, пурнӑҫ сукмакне пӗрле такӑрлатма пуҫлаҫҫӗ. Вӑхӑт ҫитсен, хӗр ҫуралать, ӑна мӑн аслашшӗне хисеплесе Аня ят параҫҫӗ. Кӗҫех вӑл ӳссе Хусанти федераци университетӗнче вӗренме пуҫлать, ашшӗпе амӑшне лайӑх паллӑсемпе савӑнтарма тытӑнать.

Сергей Разиновича вара тӑван ен ытларах та ытларах хӑй патне туртать, вӑл ҫемйипе тӑван ялне таврӑнать. Хӑйӗн ӗҫне кунта малалла тӑсма хӗмленет. Ӗмӗтне Тӑвай районӗнчи хӑйсен ялӗпе кӳршӗллӗ Тушкилте пурнӑҫа кӗртет.

2013 ҫулхи февраль уйӑхӗнче кунти ял фермине хӑй ячӗпе хресчен-фермер хуҫалӑхӗ йӗркелет. Хуҫалӑхӑн 1500 гектар ытларах ҫӗр пур. Унта тырӑ-пулӑ, вывӑх апачӗх куракӑсем, кукуруза ҫитӗнтереҫҫӗ. Хӑй ӗҫлесе пурӑннӑ Саратов облаҫӗнчен ӑратлӑ икҫӗр пуҫ ӗне илсе килнӗ. Унтанпа вывӑхсен йышӗ ҫулсерен ӳссе хушӑнса пырать. Паянхи кун тӗлне фермӑра 1100 пуҫа яхӑн майракаллӑ шултра вывӑх, вӗсенчен 440 пуҫӗ, маларах асӑнтӑмӑр ӗнтӗ – сӑвакан ӗнесем. Вывӑхсен ӑратлӑхне лайӑхлатса пыма пӗлтӗр те ӑратлӑ пушмаксем туяннӑ. Пысӑк тухӑҫлӑ ӗнесен пӑрушӗсене те фермӑра кӗтӗве малалла ҫӗнетсе пыма ҫитӗнтереҫҫӗ.

Аталану ҫулӗ нихҫан та ҫӑмӑл мар. Илларионовсен туслӑ ҫемйи те ашшӗпе амӑшӗн пилӗпе пӗр ҫӗре чӑмӑртанса пиччӗшӗ Сергей Разинович ертсе пыракан ҫемье фермине ҫине тӑрса ҫӗклеме, аталантарса пыма тытӑннӑ. Туслӑ, ӗҫчен те ҫураҫуллӑ ҫемьесенче мӗн авалтанах аслӑ ачине кӗҫӗннисем итленӗ, сума сунӑ. Илларионовсен те ҫак ырӑ йӑла аслашшӗ-асламӑшӗнчен, ашшӗ-амӑшӗнченех тӑсӑлать, пурнӑҫа тӗревлесси вӗсенченех ҫирӗпленсе пынӑ. Сергей Разиновичӑн та виҫӗ йӑмӑкӗпе шӑллӗ тата ҫуллахи вӑхӑтра вӗсен ачи-пӑчи те пурте фермӑра ӗҫлеҫҫӗ. Хресчен-фермер хуҫалӑхӗн ертӳҫи пулнӑ май, Сергей Разинович пурин валли те ӗҫ вырӑнӗ тупнӑ, пурте пӗрле пӗрлехи бизнеса аталантараҫҫӗ. Аслӑ пӗлӳллӗ Надежда Разиновнапа унӑн мӑшӑрӗ Александр Валерьевич ферма заведующийӗпе хуҫалӑх управляющийӗн ӗҫне тытса пыраҫҫӗ, Алена Разиновна, пӗлӗвӗпе педагогпсихолог, сӗт суса унран продукци тирпейлекен цех начальникӗ, кӗҫӗн йӑмӑкӗ, вӑл та аслӑ пӗлӳллӗ, кашни отпускӗ пӗчӗк ачисемпе фермӑра ирттерет, хуҫалӑхра ӗҫлекенсене апат пӗҫерсе ҫитерессишӗн яваплӑ – столовӑй хуҫи. Юрий Разинович – хуҫалӑх пуҫлӑхӗн ҫумӗ, снабженец. Ачисем те тӗрлӗ усӑллӑ ӗҫе явӑҫнӑ: кам ҫамрӑк пӑрусене курӑк ҫине илсе тухать, кам – ытти яваплӑ ӗҫре. Пурин алли валли те ӗҫ тупӑнать. Тӗрӗссипе, хуҫалӑх столовӑйӗнче апат пӗҫерме кирлӗ ҫимӗҫсем таранах ҫемье фермин территорийӗнче туса илеҫҫӗ. Аслашшӗ Илларион Павлович тата ашшӗ Разин Илларионович пекех, пиччӗшӗ хӑйсемшӗн питӗ тимленине калаҫа кӑтартаҫҫӗ йӑмӑкӗсем. Хӑйсем те ӑна ырӑ тума тӑрӑшаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, пӗрле канаш тытса, сума суса вӗсем Сергей Разинович ҫур ӗмӗр тултарнӑ тӗле хӑйне систермесӗр чаплӑ парне – «Единство – залог успеха Илларионовых» кӗнеке пичетлесе кӑларчӗҫ. Тӗрлӗ вӑхӑтри тӗрленчӗксемпе очерксене тата сӑн ӳкерчӗксене вырнаҫтарнӑ кӗнеке кӑмӑла килмелле, асра юлмалла пулса тухнӑ.

Илларионовсен пысӑк ҫемйинче хутшӑнусем яланах пӗр-пӗрне хисепленӗ никӗс ҫинче йӗркеленнӗ. Аслисемпе канаш тытасси, вӗсене итлесси ҫавӑнтан пырать. Ҫемье членӗсем ӗҫри харпӑр хӑй тивӗҫӗсене пурте лайӑх пурнӑҫлама тӑрӑшаҫҫӗ пулин те, Сергей Разиновичпа канашласах тӑраҫҫӗ. Сӑмахран, хӑй ӗҫӗнче чӑннипех те пултарулӑ Надежда Разиновна ман умрах сотовӑй телефонпа хӑйне канӑҫсӑрлантаракан ыйтупа пиччӗшӗпе ҫыхӑнса канашланӑччӗ, унӑн шухӑшне пӗлнӗччӗ, ҫакӑнпа кӑмӑллӑ юлнӑччӗ.

Ҫемье фермин территорийӗ айккинчен пӑхсан пӗр-пӗр уйрӑм патшалӑх пек курӑнать. Маларахри фермӑпа танлаштарсан ҫӗрпе пӗлӗт пек уйрӑмлӑх. Витисем пысӑк та ятуллӑ, тӑн-тӑн та илемлӗ, ҫутӑ, таса. Картиш те тасалӑхпа палӑрса тӑрать. Сенажпа силос траншейӑсенче упранаҫҫӗ. Вӗсене ҫуллен лайӑх пусӑрӑнтарса тӗплӗ упраҫҫӗ. Пысӑк йыша нумай апат кирлӗ. Унсӑрӑн сӑвӑм ӳсессе кӗтмелли ҫук. Илларионовсем пӗтӗм апата тенӗ пек хӑйсем хатӗрлеҫҫӗ. Ӗнесене икӗ витере усраҫҫӗ, вӗсем 2013 тата 2014 ҫулсенче хута янӑскерсем. Ӗҫе пӗлсе йӗркелесси тӗп вырӑнта. Ӗнесем тӑракан вырӑна ҫуса тасатса тӑраҫҫӗ, пухӑнакан шӗвеке уя илсе тухаҫҫӗ. Сӑвакан, пӑруламалли ӗнесен, пушмак пӑрусемпе ҫамрӑк пӑрусен витисенче те тасалӑх хуҫаланать. Витисенче тӗп ӗҫсене механизациленӗ, сывлӑша уҫӑлтарасси таранах. Ку тӗлӗшпе витесенче вентиляци вырнаҫтарнӑ. Ӗнесене икӗ сменӑпа ӗҫлесе машинӑпа ултӑ оператор суса ӗлкӗрет. Ӗнесем йӗркене хӑнӑхса ҫитнӗ, хӑйсемех черетпе кӗрсе тӑраҫҫӗ, сунисем тухаҫҫӗ. Кашни ӗне мӗн чухлӗ антарнине датчиксем кӑтартаҫҫӗ. Сунӑ сӗт пӑрӑхсем тӑрӑх тӳрех сивӗтекен установкӑсене пырать, витери производство условийӗсемпе хутшӑнмасть, таса хальлӗн упранать. Ӑна ҫийӗнчех сивӗтеҫҫӗ. Фермӑра хӑйсем суса илнӗ сӗтрен тӗрлӗ продукци кӑларакан цех та хута янӑ темиҫе ҫул каялла. Унта ЧР ял хуҫалӑх министрӗ Сергей Артамонов та пулнӑ, хуҫалӑхӑн, ҫемье фермин ӗҫне пысӑка хурса хакланӑ, малашлӑхра та ӑнӑҫусем суннӑ. Условисем ҫӗнелселайӑхлансах пыраҫҫӗ фермӑра. Ҫӗнӗ технологипе килӗшсе тӑракан витесем тума тӗрлӗрен грантсем ҫӗнсе илнӗ Илларионовсем хӑй вӑхӑтӗнче: 2014 ҫулта – ҫемье подрячӗ ӗҫлекен фермӑна аталантарма 5 миллион, 2018 ҫулта – кормоцех ҫуртне хута яма 10 миллион тенкӗлӗх грантсем.

(Малалли 5-мӗш стр.)



Витере ҫутӑ та таса

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 4-мĕш стр.)

Грант укçи-тенкипе, сĕтрен кĕрекен тупăша хушса витесем хăпартнă, тĕрлĕ техника туяннă, гараж-мастерской, кормоцех, тырă хранилищи, пăруламалли уйрăм ĕçе кĕртнĕ. Техника çителĕклĕ: «Беларус» тракторсем, иномарка, икĕ КамАЗ, груз турттармалли фургонсем, комбайнсем тата ытти те. Кĕскен каласан, çĕр ĕçĕнче мĕн кирли пурте пур. «Кировец» К-525 трактор та туяннă.

Ĕçлекенсемшĕн те условисем лайăх. Ферма Тушкил ялĕнчен аяккарах вырнаçнă май, унта ĕçе çӳрекенсене ир-каç машинăпа кайса илсе леçеççĕ. Кӳршĕ ялсенчен килекенсем валли ăшă та хăтлă икĕ хутлă çурт хăпартнă. Çемье членĕсем иккĕмĕш хутра икшер вырăнлă пӳлĕмсенче пурăнаççĕ пулсан, ĕçлекенсем – пĕрремĕш хутра. Капла кĕрсе канма, апатланма, тухса çӳреме меллĕрех. Столовăйĕ те аялти хутра, унта апата тӳлевсĕр çитереççĕ. Ферма çуртĕнче душевойсемпе туалетсем тата специалистсен кашнин уйрăм пӳлĕм пур.

Территоринче, витисенче пур çĕрте те видеокамерăсем вырнаçтарнă.

Сергей Разинович – йĕркелĕхе мала хуракан, çемье хаклăхĕсене упракан тата хушса пыракан, пурнăçпа тан утакан тата ырă ĕçсем тума хăнăхнă çын. Хăйсен ял урамне çеç мар, Тушкил ял хĕрринчен пуçласа ферма хапхи таран хăй укçи-тенкипе асфальт сарса якаттарнă. Мăнçырма ял чиркĕвне, Турра ĕненекенсене пулăшса ашшĕ, Разин Илларионович, пуçарнипе чиркӳ чанĕ илсе панă, шыва кĕмелли купеле те Сергей Разинович тăрăшнипе туяннă. Тушкил чиркĕвне те пулăшнă. Донецк çĕрĕ çине те икĕ хутчен çитсе килнĕ фермер. Малтанхинче хамăр салтаксем патне артистсемпе пĕрле кайнă, вĕсене укçа-тенкĕпе, ыттипе пулăшнă, иккĕмĕш хутĕнче темиçен пухăнса салтаксене УАЗ машина туянса панă. Гуманитарлă пулăшу фургонне çапăçу хирĕнче кирлĕ япаласем тиесе ăсатнă чухне чи хастаррисенчен пĕри пулнă Сергей Разинович. Кăмăлĕ çавăн пек ырă унăн, пархатарлă ĕçшĕн çунакан çын вăл. Çавăнпа хисепĕ те пысăк. Республикăра тата унăн тулашĕнче те хисепре, чысра, çӳллĕ шайра унăн хастар ĕçĕ тата вăл ертсе пыракан «С.Р.Илларионов» хресчен-фермер хуçалăхĕпе çемье фермин çитĕнĕвĕсем. Ахальтен мар Раççейпе республика, район шайĕнчи дипломсене, Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене, нумай-нумай çын хисепне тивĕçнĕ.

Ӳркенмен ăста пулнă теççĕ. Хăйсен пĕрлехи хастар та пархатарлă ĕçĕпе малашлăх никĕсне çирĕплетсех пыраççĕ Илларионовсем.

**Иван ГЛАДКОВ**

ТЕРРОРУ – НЕТ!

# Жизнь дана, чтобы творить и создавать, а не взрывать и убивать!

**В ноябре 2023 года волею судьбы мне довелось побывать в городе Владикавказ, в 7 км от аэропорта которого находится город Беслан. За годы трудовой деятельности я много слышала и читала о терроризме, проводила с молодежью различные акции, беседы, учения, уроки… Слово «теракт» и события, связанные с самым крупным терактом России, всегда вызывали в моем сердце сострадание и скорбь. Но только в тот день, побывав на месте трагедии, я всем сердцем ощутила настоящий ужас, который несет это явление. А ведь не зря слово «терроризм» переводится с латинского как «страх», «ужас». Это понастоящему очень страшно…Поделюсь с читателем своими воспоминаниями.**





Мы взяли до Беслана такси. Таксист попался очень общительный. За время, пока он вез нас в школу № 1, которая сейчас стала мемориалом, успел рассказать очень многое о тех печальных событиях 1 сентября 2004 года. «Уже за несколько дней до трагедии в городе творились странные вещи. Говорили, что готовится теракт. В последние дни августа было много людей в милицейской форме, на въезде в Беслан осматривали все автомобили», - показал он нам то место, откуда в город въехали террористы. Местность чем-то очень напоминала наш Канаш, похожие улицы и дома.

Официальные цифры действительно страшные: 1128 человек в заложниках. Большинство из них – дети. Каждый четвертый погиб. 3 дня заложники провели в нечеловеческих условиях, без воды, пока все не закончилось штурмом здания и последующими взрывами. Мы входим на территорию школы и видим красное кирпичное здание с выбитыми окнами, почерневшее от времени и боли. Сейчас уже в этой школе никто не учится, неподалеку построили новую. На территории возвели церковь Новомучеников. Рядом со школой находится тот самый спортивный зал, где все происходило. Его обнесли шатром, но не восстановили, на стенах, на полу – везде следы того ужасающего разрушения, окон нет, на полах пробоины от взрывов гранат, заделанные цветами. Внутри все заставлено мягкими игрушками, бутылочками с водой, на стенах висят фотографии погибших, в том числе фотографии погибших спецназовцев Альфы и Вымпела, которые своими телами закрывали детей от пуль. Все стены спортзала исписаны надписями, которые оставили люди со всей России. Я тоже сажусь за стол и пишу: «Царствие небесное! Вечная память. Чувашия (Янтиковский муниципальный округ) скорбит с вами…» Мимо нас проходит женщина в черном. Она плачет. Прошло целых 20 лет, но горе от этого не чувствуется менее остро. Здесь невозможно сдержать слез, мы плачем все.

Я читала много воспоминаний тех, кто чудом остался жив. О том, как очень тяжело было малышам. О маленьком мальчике, который в середине второго дня кинулся перед матерью на колени и сквозь слезы стал умолять дать ему воду. А террористы стояли и смеялись. О парне, который, похоронив своих шестерых родственников, остался сиротой, навсегда уехал жить в Москву и больше никогда не хочет возвращаться в этот город, где каждый вздох напоминает ему о боли: «В первый день была надежда. Во второй - апатия. К утру третьего дня большинство из нас смирилось с тем, что не уйдет из школы живым. Мне кажется, что к третьему дню я находился уже в полуобморочном состоянии. Все виделось сквозь пелену и воспринималось как через какой-то фильтр. Террористы к этому времени стали очень злыми, но их злость тоже уже воспринималась с апатией. Дети плакали и устрашающие выстрелы в воздух, которые до этого пугали и заставляли замолчать, уже не действовали. А потом был взрыв, и в стене школы открылся спасительный выход на улицу. Мы все бросились бежать, и я, и мама, и братик. Мама бежала последней. В какой-то момент я хотел поменяться с ней местами, но почувствовал жгучую боль в ключице. Очнулся я уже в больнице. И, несмотря на то, что врачи несколько дней обещали мне, что мама скоро придет, я сразу понял, что ее больше нет».

Далее таксист везет нас к мемориальному кладбищу «Город ангелов». Оно образовалось за несколько дней – 300 могил, столько людей в этом городе никогда не умирало. Мы идем мимо могил. Вот похоронены брат с сестрой – их могилы рядом. Вот мать и трое детей. На это снова невозможно смотреть без слез. Кажется, что здесь жизнь остановилась. И все, что существует за пределами этого кладбища, - ненастоящее. А настоящее, страшное, непоправимое – здесь… Здесь также море мягких игрушек, а вдоль стены у входа – множество статуэток в виде ангелочков в память о неповинных детях, чью жизнь забрали террористы.

Вот уже 20 лет, как 1 сентября – день большого траура в нашей стране. Все мы понимаем, что терроризм – реальная угроза национальной безопасности страны, поэтому проблемам противодействия терроризма и экстремизма в России уделяется пристальное внимание. Терроризм относится к числу самых опасных и трудно прогнозируемых явлений современности. В результате совершения террористических актов страдают ни в чем неповинные люди. Он может предостерегать нас везде, но мы должны ему противостоять. Некоторые могут подумать, что мы далеки от этого, и никому не придет в голову совершить теракт здесь, рядом с нами. Но память о Беслане не дает нам так думать. И я постоянно готова напоминать молодежи о том, что «жизнь дана, чтобы творить и создавать, а не взрывать и убивать». Мы сегодня, 3 сентября, в день солидарности в борьбе с терроризмом, прикладываем свои ладошки к сердцу, тем самым показывая свою солидарность и сочувствие. Беслан, мы с тобой! Ангелы, спите спокойно...Главная ценность – это жизнь. И мы должны жить, создавать, созидать за тех, кто не смог.

**Светлана НИКОЛАЕВА,**
**советник главы администрации Янтиковского муниципального округа по работе с молодежью**



## Çĕр çинчи мирлĕ пурнăçшăн

**Тăвайри ача-пăча библиотекинче «Беслан ыратăвĕ – Раççей ыратăвĕ» граждан-ла-патриотла акцие хутшăнса аса илӳ сехечĕ йĕркеленĕ.**

Çирĕм çул каялла Беслан хулинчи шкулти трагеди çинчен, çĕр çинче пур халăх та пĕр-пĕринпе килĕштерсе, йăлийĕркисене, ĕненĕвне хисеплесе пурăнни мĕн тери пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен калаçнă. Чрезвычайлă лару-тăрура мĕнле тытмалли çинчен ăнлантарнă. Бесланти тата ытти террорла актсенче вилнисене асăнса пĕр минут шăп тăнă.

Чутейри культура çурчĕпе библиотека, ялти шкул пĕрле терроризмпа кĕрешмелли пĕрлĕх кунĕ ячĕпе асăну мероприятийĕсем йĕркеленĕ. «Пурнăç тумламĕ» акци вăхăтĕнче вĕренекенсем виçĕ кун хушши шывсăр асапланнă çынсемпе пĕр пулса, шыв ăсса илсе клуб умĕнчи чечексене шăварнă. «Кашни тумлам шыв террорсăр, инкек-синкексĕр пурнăç çине шанни пултăр»,– тенĕ.

**Хамăр инф.**

КУЛЬТУРА

# Чăрăшкассинче – уявра

**«Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕн артисчĕсем çак кунсенче Канаш округĕн-чи Чăрăшкасси ялĕнче уявра хăйсем те савăнчĕç, ял халăхне те килентерчĕç. Малтанах хитре те ятуллă ял клубне уçрĕç, 49 ыврăнлă клубра халĕ çав тери илемлĕ, хăтлă. Йывăçран пулнă çурт юхăннăран çĕнни çĕкленĕ.**



Чăрăшкасси клубсăр чылай çул пурăннă, çавăнпа та пуçару меслечĕпе клуб тума шутланине ял халăхĕ ырласа йышăннă, 350 пине яхăн укçа пуçтарнă, ыттине округ тата республика саплаштарнă. Ĕçсене типтерлесе, майлаштарса пыраканĕ ял старости Николай Филиппов пулнă. Вăл çав тери правур та сатур, ял çинче хисеплĕ çын. «Чăн-чăн ял хуçи»,–терĕç ялта Николай Андреевич çинчен. «Тăрмăш» халăх ушкăнĕ те аван пĕлет ял старостине. Николай Андреевич ял увĕсене чĕнсех тăрать пирĕн коллектива. Ушкăнпа та, пĕчченшерĕн те юрласа-ташласа савăнтăмăр пĕрле. Купăспа Игорь Кузьмин хавхалантарса пычĕ. Хăй хайланă юрăсене пĕтĕм кăмăлтан юрласа куракансене савăнтарчĕ. Елена Матросован «Курас килет» юррипе вара пурте ташларĕç. Хаваслă юрă-кĕвĕпе иртрĕ уяв, тутлă чăваш сăрипе, чăвашсен шăрпипе сăйлантăмăр.

Çакăн пек уявсенче пулни тавракурăма анлăлатать, пуянлатать, савăк кăмăл парнелет, тăвансемпе, тус-юлташсемпе тĕл пулма, çĕннине ĕçе кĕртме пулăшать.

**Елена МАТРОСОВА, ушкăн ертӳçи**

ХĔЛЕ ХАТĔРЛЕНСЕ

## Кабачокран



**4 кг кабачок, 1 кг сухан, 3 пуç ыхра, 1/2 стакан тип çу, 1 стакан шыв, 3 кашăк сахăр, 0,5 стакан 6 процентлă уксус, ешĕл петрушка, 0,5 стакан тăвар кирлĕ.**

Кабачока тасатса çаврашкан касмалла, вĕри шывра 5 минут тытса пăшăхланă хыççăн сивĕнессе кĕтмелле. Сухана вĕтĕ-вĕтĕ турамалла, петрушкăна тураса кабачокпа хутăштармалла. Çакăн çине ыхра хутăшне ярса йывăр япалапа пусармалла та 12 сехетлĕхе холодильнике лартмалла. Кайран ăна банкăсене тултарса 20 минут стерилизацилемелле, хупмалла.

Ыхра хутăшĕ: пускăч витĕр кăларнă ыхрана сахăрпа тата тăварпа хутăштармалла, тип çу, вĕретсе сивĕтнĕ шыв тата уксус хушмалла

## Соус



**2 килограмм помидор, çур килограмм пан улми, 100 грамм ыхра, 2 апат кашăкĕ пан улми уксусĕ, 3 апат кашăкĕ сахăр, 1,5 апат кашăкĕ тăвар илмелле.**

Помидора, пан улмине вакласа кастрюле ямалла, 20 минут пĕçермелле. Унтан дуршлаг витĕр кăлармалла. Кайран вĕтĕ туранă ыхра, сахăр, тăвар хушмалла, тепĕр 20-30 минут пăшăхламалла. Уксус ярсан тепĕр 1 минутран çулăм çинчен илмелле. Соуса стерилизациленĕ банкăсене тултармалла.

## Хĕренрен



**2 килограмм помидор, 400 грамм хĕрен тымарĕ, 200 грамм ыхра, 2 апат кашăкĕ тăвар, 2 апат кашăкĕ сахăр илмелле.**

Хĕрен тымарне лайăх çуса тасатмалла, ăна помидорпа, ыхрапа пĕрле аш armanĕпе авăртмалла. Помидор ытлашши пиçсе кайнă тăк авăртнă хыççăн ăна дуршлаг çине хурса сăрăхтармалла. Кун пек хутăш çĕрарах пулĕ. Çимĕçсене тăвар, сахăр хушса пăтратмалла. 1 сехет лартнă хыççăн ăна таса банкăсене тултармалла, холодильникре упрамалла.

# Чечек çыххисем хатĕрлессипе

**Пĕлӳ кунĕ умĕн Тăвайри ача-пăча библиотекинче чечек çыххисем хатĕрлессипе мастер-класс иртнĕ. Опытлă флорист Анжела Юрьевна Илларионова ачасене пахчара ӳсекен чечексенчен илемлĕ çыхăсем тăвас ăсталăхпа паллаштарнă, вĕсене тĕссене кура мĕнле майлаштармаллине, вазăра хăйсен илемĕпе ытларах савăнтарччăр тесен мĕн тумаллине тĕплĕн ăнлантарнă. Çавăн пекех флорист професси çинчен те нумай пĕлнĕ ачасем.**



Библиотекарь вулавăшра «Чечексен вальсĕ» кĕнеке куравĕ йĕркеленĕ, унта пахчара, уй-хирте ӳсекен чечексем çинчен çырнă кĕнекесене вырнаçтарнă. Чечексем çинчен кăсăклă викторина ирттернĕ. Ачасем чăн-чăн флористсем пек туйнă мастер-класра, хăйсене килĕшекен тата пăхса ӳстернĕ чечексенчен хитре букет ăсталанă. Вĕсене пĕлӳ кунĕнче учительсене, сывăх çыннисене парнеленĕ.

**Наталия УСЬКИНА, библиотекарь**

# Çĕнĕ кĕнеке –халăха парне

**Çак кунсенче çĕнĕ кĕнеке «Притяжение света» ятпа кун çути курчĕ. Пирĕншĕн, вăрçă ачисемшĕн, кашни кĕнеке савăнăç. Ачалăх вăрçă çулĕсенче иртрĕ, çамрăклăхра та пурнăç çăмăл пулмарĕ. Йывăрлăхсем пирки çырнă та кĕнеке авторĕ Валентина Кузьминична Чернова (Тимушкина). Ученăй-агроном дипломне илме тивĕçнĕ вăл çак иртнĕ вăрçă асапĕсене халăхпа пĕрле чăтса. Вăл Вăрмар районĕнчи Тикаш ялĕнче 1935 çулта çуралса ӳснĕ.**

Пирĕн Тенеялĕнчен вунă çухрăмра вырнаçнă Тикаш. Шăхальти вăтам шкулта вĕреннĕ эпир Тушкил, Йăнтăрчă, Тенеяль, Сăхăтпуç ялĕн ачисем. Пĕр-пĕрне лайăх пĕлнĕ. Тикашран çухрăм çурăра тутар ялĕ Маматăш. Кашни вырсарникун унта пасар кĕрленĕ. Тутар ялне пасара эпир Тикаш витĕр çӳренĕ. Çапла вара çак кĕнекере çырса кăтартни пирĕншĕн питĕ çывăх. Элпуçĕнчен пуçласа трасса чавнă Хусаналла. Хусан хысакĕ тенĕ ăна. Пирĕн ялта Пуянкасси, Киччĕ ялĕн çыннисем – трасса, блиндаж, окоп чавакансем пурăннă. Çак асăннă трасса пирĕн ялтан Хĕрлĕ çыр, Тикаш çумĕпе Тутар республикинелле тăсăлнă. Автор çав çулсене çырса кăтартнă «Далекое детство» сыпăкра. Вĕсен килĕнче те трасса чавакансем пурăннă. «Анне ăшшине туятчĕç», – тесе аса илет çав кунсене автор. Страница хыççăн страницăра ачалăх кунĕсем. Тăста, аякра вăрçă пырать. Халăх çĕнтерĕве çывхартма тăрăшнă. Шкула каймалли кун та çитнĕ. Кĕнекен иккĕмĕш сыпăкĕнче шкулта вĕреннĕ çулсем çинчен çырса кăтартнă. Вĕсен пĕрремĕш вĕрентекенĕ – Анна Андреевна, пирĕн Тăвай районĕн хаçачĕн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ Герман Матвеевич Матвеев мăшăрĕ пулнă. Иккĕмĕш класра вĕреннĕ чухне, майăн 9-мĕшĕнче, халăх çĕнтерĕве кĕтсе илнĕ. Çав куна ăшшăн аса илет автор. Шăхаль шкулĕнче вĕреннĕ йывăр çулсем тата... Кашни кун пилĕк çухрăм утнă вĕренес тесе Шăхаль ялне, çил-тăманра та, кĕрхи сивĕ çумăр витĕр те. Пурĕ 12 ялтан пуçтарăннă вăрçă ачисем вĕренес килнипе. Сăмах майăн каласан, манăн атте Николай Ахтимирович Ахтимиров та çак шкултах вĕреннĕ. Ун чухне ăна Хресчен çамрăкĕсен шкулĕ тенĕ. 1929 çулхи август уйăхĕнче Мускавра Пĕтĕм Союзри пионерсен организацийĕн пĕрремĕш съезчĕ иртнĕ. Пирĕн атте Шăхаль шкулĕнчен çав съездăн делегачĕ пулма тивĕç пулнă. Республикăран пурĕ 55 делегат хутшăннă.

Эпир те тантăшсемпе пĕрле Шăхаль шкулĕнче вĕреннĕ. Автор хăйĕн кĕнекинче çав çулсене аса илет, тĕрлĕ ял ачисемпе пĕрле тăрăшса вĕреннине асăнать. Вăтам шкул та хыçа юлчĕ, эпир Валентина Кузьминична шăллĕпе Михаил Кузьмич Тимушкинпа пĕр класра вĕрентĕмĕр. Ун чухне пирĕн пурин те аслă шкула вĕренме каяс ĕмĕт пулнă. Геннадий Александрович Чернов, Роза Ивановна Сапаркина, Шупашкарта И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх институтĕнче вĕреннĕ, кĕнеке авторĕ Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтĕнче пĕлӳ илнĕ. Вĕсем пире инçетри çăлтăр çути пек çутатса тăнă. Пирĕн те вĕсем пек студентсем пулас килнĕ. «Студент çулĕсем» сыпăкра шăпах студент пурнăçне сăнласа панă. Тихашран Вăрмара çитме 20 çухрăм çуррăн утнă. Вăрмартан Канаша пуйăспа çӳренĕ. Ун чухне Шупашкартан Вăрмара автобус çӳремен. Хамăр та Канашран тăван яла 30 çухрăм утнă. Çурăм хыçĕнче кутамкка, унта апатçимĕç чикнĕ. Пурнăç йывăр. Чăтнă, вĕренес килни çĕнтернĕ. Ял хуçалăх институтĕнче пирĕн ялсем Гаврил Алексеевич Алексеев, Галина Старостина, Николай Павлов (Тушкилсем) вĕренчĕç, диплом алла илчĕç. Студент çулĕсенче вĕсем кашни çулах çĕнĕ çĕрсем уçнă çĕрте вăй хучĕç.

Асăннă кĕнекере автор Казахстан, Алтай çĕрĕсенче ĕçлени çинчен асăннă. Алтая эпĕ те нумай çул иртнĕ хыççăн кайса куртăм. Василий Шукшин конференцине хутшăннăччĕ. Алтайра пирĕн аттен пиччĕшĕ Демьян тете пурăнса ирттерчĕ. Атăл тăрăхĕнчи выçлăх çул тухса кайнă та çавăнтах пурăнма юлнă. Пысăк çĕршыв Алтай. Çавăнта вăй хунă чăваш студенчĕсем, çав шутрах пирĕн район ывăл-хĕрĕ те. Кăкăрĕсем çинче «За освоение целинных земель» медаль йăлкăшнă вĕсен. Кĕнекере çырса кăтартни пĕтĕмпех тĕрĕс. Хăй курнине, чăтнине сăнласа панă. Тавах автора çав вăхăтри халăх пурнăçне çырса кăтартнăшăн. Палăк лартниех вăл халăх паттăрлăхне.

**Роза ПЕТРОВА–АХТИМИРОВА, Тенеяль-Шупашкар**

## Ăшшăн саламлатпăр



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – юратнă аннене, ăшпиллĕ асаннене, кукамая – Киччĕ ялĕнче пурăнакан **Галина Сидоровна Афонинана** ыран, сентябрĕн 7-мĕшĕнче, 83 çул тултарнă май, чун-чĕререн тухакан чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телейпе вăй-хал, тăнăçлă пурнăç, ăнăçусем сунатпăр. Чи сывăх çыннусен ăшшине, тимлĕхне, пурин хисепне туйса тăрса тата нумай-нумай çул ырă курса пурăнмалла пултăр санăн. Кашни çĕнĕ кун савăнăç, телей кӳтĕр. Тĕнчере миçе ăшă сăмах, пурте саншăн пулччăр, санăн ырă та ăшă кăмăлу, çутă куллу пурин валли те çиттĕр. Санри теветкеллĕхпе вашаватлăх, кăмăл пуянлăхĕпе чун илемĕ, ĕçченлĕх, тараватлăх, çын хушшинчи хисепӳ ан иксĕлтĕр. Тавах сана мĕнпур ырришĕн, пире пур енĕпе те пулăшса, хавхалантарса тăнăшăн. Эпир сана чунтан юрататпăр, хисеплетпĕр, саншăн савăнатпăр.

Ĕмĕрӳ сан пултăр вăрăм,
Турă пытăр пулăшса.
Куллен килен кăвак шуçăм
Пиллетĕр ырă кун сана.

**Ăшă салампа – хĕрĕ, икĕ ывăлĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем** 1045



Паян Ямпулатра пурăнакан **Любовь Сафроновна Германова** хăйĕн сумлă юбилейне паллă тăвать, пур çывăх тустăвана кĕрекене вăл йыхравлать. Ырă кăмăллă, юратнă аппана ăшшăн саламласа пĕтĕм ыррине, лайăххине кăна сунас килет.

42-ре эс тăрса юлнă висĕ ачапа.
Çапах эс парăнман йывăрлăха
Ăс парса ӳстернĕ висĕ ывăлна.
Ачасем халь сан пурте çемьеллĕ,
Çирĕппĕн утаççĕ пурнăç çулĕпе.
Кĕçĕн ывăлун çемйипе пурăнатăн эсĕ
Савăнатăн халь мăнуксемпе.
Питĕ ырă кăмăллă эсĕ Люба аппа
Пур çынпа та эс пĕлетĕн калаçма.
Хуйхă килсе тухсан вара
Ялан эс хатĕр пулăшма.
Çын чунне лăплантаран,
Пулăшан, вăй-хал паран,
Сăмахпа савăнтаран,
Ырă канашсем паран.
Чăн та ырă чунлă эс аппа
Хисеплеççĕ пурте халь сана.
Ырă тунă санăн ĕçусене мухтаса
Аса илеççĕ ырăпа кăна.
Ватлăх пăхнăшăн вара паян куçран
Ан шиклен эс, ан кулян.
Ял çинче эс ятлă пулнăран,
Тĕслĕх илетпĕр санран.
Пурте, пурте тав тăватпăр,
Ачусем, тăванусем паян сана.
Çитме сунатпăр 100 çула
Пире вĕрентнĕ эс ыррине кăна.
Хăвармастпăр ватлăхра пĕр пĕччен сана.
Сан умра эпир пуçа таятпăр
Ăшă сăмахсем халь каласа.
Юбилейпе пурте саламлатпăр
Чун-чĕререн ыр сунса.
Сывлăху Люба аппа сан çирĕп пултăр,
Чи хакли вăл ватлăхра халь çав кăна.
Эсĕ манăн чи сывăх тăванăм,
Хисеплетĕп, юрататăп эп сана.
85 çул хăварнă эс хыçа
Уншăн ан лар, аппаçăм, халь эс кулянса.
Иртнĕ кунсем вара вăл санăн
Ырă ĕçусем кăна.
Вăрçă ачи эс ман аппа
Çуралнă йывăр вăхăтра.
Нумай эс курнă нушине
Çапах пултарнă вĕренме.
Шăл тухтăрĕ пулма вĕреннĕ
Ялан ĕçленĕ тăрăшса.
Пуринпе те кăмăллă эс пулнă
Ачасене те пĕлнĕ юрама.
Витаминсем парса эсĕ илĕртнĕ
Ачасен шăлĕсене юсанă вăхăтра.
Ăшшăн, çепĕççĕн калаçнă
Пĕлнĕ эсĕ вĕсене лăплантарма.
Çухатнă эсĕ çамрăклах юратнă мăшăрна.

**Надежда АНИСИМОВА, Тенеялĕ** 1044

## Автомашинăри вырăнсем

– Автомобильте хыçалти сылтăм ларкăч – чи хисепли. Унта ларма хĕрарăма, ӳсĕмпе чи аслине е çулланнă çынна сĕнеççĕ.

– Водитель хыçĕнчи – хисепĕпе иккĕмĕш вырăнта.

– Хыçалти вырăна ларма чаплă автомобильсенче кăна сĕнеççĕ.

– Водитель çумĕнчи малти вырăна куçаруçă е çул кăтартса çӳрекен çын ларать.




### Памятные даты истории РОССИИ

**8 сентября** – Бородинское сражение (212 лет)
День танкиста
Международный день памяти жертв фашизма
**11 сентября** – Победа русской эскадры над турками у мыса Тендра (234 года)
Поминовение воинов


1049 1 уйăхри вăкăр сутатăп. Т. 8-9530185052

1053 ПРОДАЮ тыкву. Т. 8-9053433774

1043 КУПЛЮ чеснок. Т. 8-9373918833

1052 ПРОДАЮ мини-трактор. Новый. МТ-110. Т. 8-9603128722

0991 ПОКРАСКА крыш, домов. Т. 8-9534482716 4-4

0966 БУРЕНИЕ КОЛОДЦЕВ, ж/б колец. Доставка. Т. 8-9603061972 5-5

0694 КУП. коз, овец, бычков. Т. 8-9278508564 25-9

1048 Ремонт холодильников и стиральных машин. Т. 8-9279955504 3-1

0217 ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Т. 8-9876617161 35-17

0961 ПЕСОК. ГРАВМАССА. ЩЕБЕНЬ. НАВОЗ. Доставка. Т. 8-9523106871 11-7

0305 ПЕСОК.ЩЕБЕНЬ.ОПГС. Т. 8-9061333944 22-15

1030 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9279985488. Володя. 11-2

1050 Скотобойня. Закупаем бычков, коров, телок. По приятным ценам. Т. 8-9379523380 8-1

1000 Требуются разнорабочие в Москву. З/п от 100 тыс. р. Т. 8-9373882555 22-4

1051 КУПЛЮ дорого. Коров, бычков, телок. Вынужденный забой. Т. 8-9379579151 8-1

1001 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9278445544, 8-9530140140 10-4

0990 КУПЛЮ бычков, коров, телок, вынужд. забой. Дорого. Т. 8-9370160057 20-4

1042 ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Качественно. Недорого. Т. 8-9656867950 4-1

1017 ОКНА ПВХ под ключ от производителя за кор. сроки. Замер. Гарантия. Скидки. Монтаж по ГОСТу Т. 8-9603031551 11-3

1031 ПРОДАЮ доломитовую муку (антипроволочник, для раскисления кислых почв) в мешках. Доставка. Т. 8-9603030529 3-2

**ООО «Канашский завод технологической оснастки»**
**приглашает на работу:**

1. Мастер производственного участка з/п от 70 000 руб.
2. Инженер-технолог з/п от 60 000 руб.
3. Менеджер по снабжению з/п от 55 000 руб.
4. Контролер ОТК з/п от 50 000 руб.
5. Слесарь по ремонту оборудования з/п от 55 000 руб.
6. Электромонтер по ремонту и обслуживанию оборудования з/п от 45 000 руб.
7. Слесарь МСР на сборку техники з/п от 75 000 руб.
8. Подсобный рабочий з/п от 40 000 руб.
9. Электросварщик ручной сварки з/п от 70 000 руб.
10. Кладовщик з/п от 45 000 руб.

**Преимущества работы в ООО «КЗТО»:**
- Высокий уровень заработной платы, дополнительное премирование при перевыполнении сменного задания;
- Полный соц. пакет, хорошие условия труда;
- Современное оборудование, высокая культура производства;
- Обучение и профессиональный рост;
- Трудоустройство согласно ТК РФ;
- Тренажерный зал;
- Корпоративный отдых
- Компенсация питания

**Адрес: г. Канаш, ул. Свободы, д. 36, ост. Мегацентр**
**Тел.: +7 (83533) 4-15-11; +7 (937) 0111570**


ВРАЧ КАНАШĔ

## Организмшăн сиенлĕ

**Сывлăх – питĕ пысăк пуянлăх, тулли, телейлĕ пурнăç никĕсĕ. Юлашки çулсенче медицинăна аталантармашкăн сахал мар укçа-тенкĕ хываççĕ. Хамăр тăрăхра та кивелнĕ фельдшер пункчĕсем ку чухнехи хăтлă йышшисемпе пуянланчĕç. Шел те, чылайăшĕ сывă пурнăçăн чи ансат йĕркисене те пăхăнмасть. Эрех, сăра куллен ĕçет.**

**Сентябрĕн 11-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери урăлăх кунĕ пулнă май, паянхи статьяра сăра ĕçни организма сиен кӳни çинчен çырса кăтартасшăн.**

Сăрара этил спирчĕ пур. Чи анлă сарăлнисен градусĕ 4-5 процентпа танлашать. 1 литр сăрана 100 грамм шурă эрехпе танлаштарма пулать. Витĕмĕ ытти спирт шĕвекĕнни пекех. «Кăшт кăна ĕçме» хăнăхни сисмесĕрех алкоголизм патне çитет.

Сăрапа иртĕхни шалти органсене чирлеттерет. Чĕре, куллен сăра ĕçнипе, шĕвек нумай уçлама тивнине кура, пысăкланса каять, унăн мышцисем çӳхелеççĕ. Çавна май миокард инфаркчĕн хăрушлăхĕ ӳсет. Тухтăрсем çак пулăма «сăра» чĕри теççĕ.

Тата çакна та каласа хăвармалла. Сăра вĕретнĕ чухне, кăпăк стабилизаторĕ вырăнне кобальтпа усă кураççĕ. Вăл та чĕре ĕçне вăйлах пăсать. Пĕверте гепатит аталанать, малашне цирроза куçма пултарать. Тата сăра шăк çулĕсемшĕн сиенлĕ – усал шыçă чирĕсем пуçланас хăрушлăх питĕ пысăк.

Пĕр литр сăрара 36 мг фитоэстрогенсем пур, ку хĕрарăмăн ар гормонĕсене çывăх. Ахальтен мар ĕнтĕ сăра юратакан арçынсем «хĕрарăмланса» пыраççĕ: вĕсен кăкăрĕсен парĕсем ӳсеççĕ, хырăмĕпе купарчи сарăлать.

Кунсерен 1-2 кĕленче сăра пушатма хăнăхнă çын пурăна киле унсăрăн çывăрайми пулать, лăпланса ситсе хăйне лайăххах туйма пуçа анратакан шĕвек тата ытларах кирлĕ пулать ăна. Кунне 15 литр таран сăра ĕçекен те пур. Çавах та вĕсем хăйсене алкоголиксен шутне кĕртесшĕн мар. Хăвăр сăрапа тусли пирки тепĕр хут шухăшласа пăхăр.

Сывă пурнăç йĕркипе пурăнсан сире нимĕнле чир те чăрмантармĕ.

**Татьяна ИГНАТЬЕВА,**
**врач-нарколог**


"Ял ĕçченĕ" (“Сельский труженик”)
Тĕп редактор А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви;
Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ» ХТУ

Хаçата çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаçат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.
Пичете панă 05.09.2024 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ тата каялла тавăрса памаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци яваплă тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номершĕн яваплă дежурнăй И.И.ГЛАДКОВ
Компьютерпа калăплакан: Н.В.АЛЕКСАНДРОВА

Хаçата районти “Ял ĕçченĕ” хаçат редакцийĕнче наборласа версткăланă, “Чăваш Ен” ИПК” АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт.
Çырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1425. Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш çурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăçĕн тата çырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru